24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 НОЯБРЬ 13 КĔҪНЕРНИКУН 268 (7983) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАСҪР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран войсковой чăсĕсене ССР Союзĕн орденĕсемпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн çаксене наградалас:

Ленин орденĕпе:

Авиацин 29-мĕш истребительнăй полкне.

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе:

Авиацин 61-мĕш штурмовой полкне.

Артиллерин 289-мĕш противотанковăй полкне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти ноябрĕн 9-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин орденĕ** тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, çаксене **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Кĕçĕн сержант **Курбан-Дубды.**
2. Майор **Миклей** Геннадий Валерьевич.
3. Красноармеец **Овчаренко** Дмитрий Романович.
4. Полковник **Пушкин** Ефим Григорьевич.
5. Полковник **Капетов** Иван Михайлович.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти ноябрĕн 9-мĕш.

Колхозсен тупăшне тĕрĕс валеçмелле

Республикăри колхозсем кăçал тухăçлă тырпул туса илчĕç. Вăтам шутпа гектартан çĕршер пăт е унтан та ытларах тĕштырă туса илнĕ колхозсем республикăра пĕрĕн мар, çĕршерĕн шутланаççĕ. Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз 120 пăт, «КИМ» колхоз 126 пăт, «Ищеряково» колхоз 120 пăт, Вăрнар районĕнчи Чапаев, Молотов тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çĕршер пăт ытларах, Элĕк районĕнчи «Комбайн», «Броневик» колхозсем çĕршер пăт тĕштырă туса илнĕ.

Республикăра малта пыракан колхозсем ялхуçалăхĕн кĕрхи ĕçĕсене вĕçлерĕç. Нумай колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, чаплă ситĕнӳсем турĕç. Çĕрпӳ районĕнчи «Луч», «Вулкан» колхозсем ялхуçалăхĕн кĕрхи ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Вĕсем авăн çапса пĕтерсе, тырпулсене юсавлă амбарсене хывнă. «Луч» колхоз вăтам шутпа гектартан 130 пăт ыраш, 98 пăт тулă, 91 пăт сĕлĕ туса илнĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ май, колхозсем тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пама хатĕрленме тытăнчĕç. Тупăшсене валеçе парасси колхозсен пурнăçĕнчи тата вĕсен ĕçĕнчи ответлă тапшăр пулса тăрать. Вăл партипе правительство «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине уçăмлăн кăтартса памалла.

Тупăшсене валеçе пама хатĕрленнĕ май, халĕ колхозсенче кашни бригада, звено тата уйрăм колхозниксемпе колхозницăсем планлă заданисене мĕнле тултарнине, хăйсене çирĕплетсе пана участоксем çинче туса илнĕ тырпул тухăçлăхне палăртмалла. Кашни колхозникăн, бригадăн тата звенон ĕçĕсем тĕкĕр çинчи пек курăнса тăмалла. Çавăн пек чухне кăна çĕнĕ постановлени тăрăх планлă заданисене тултарнăшăн колхозниксене хăшăн тĕрĕс хушса тӳлеме пулать.

Тупăшсене валеçме хатĕрленес тĕлĕшпе ревизи комиссисен умĕнче те ответлă ĕçсем тăраççĕ. Вĕсен колхозниксен ĕç кĕнекисем çине çырса пана ĕçкунĕсене счетсемпе танлаштармалла, ĕçкунĕсене тĕрĕс шутласа çырса панине тĕрĕслесе тухмалла, тырпулсемпе ытти тупăшсене тĕрĕс шута илмелле. Ревизи комиссисен колхоз правленин ĕçне ревизи туса ирттермелле, ревизин результачĕсене колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явмалла. Çаксемпе пĕрлех ревизи комиссисен колхозсенчи отчетпа учет ĕçĕсене тивĕçлĕ вырăна лартма пулăшмалла.

Халĕ колхозсенче общественăллă фондсем тумаллине палăртмалла та колхозниксен пухăвĕсенче тĕплĕн сӳтсе-явмалла. Кашни колхозра вăрлăх тата страховой фондне, фураж тата страховой фондне, кĕрхи культурăсен 100 процентлă вăрлăх фондне, продовольствин страховой тата пулăшу фончĕсене тумалла. Кусемсĕр пуçне колхозниксен пухăвĕсем палăртнă тăрăх, государствăна тырă сутмалли тата ытти фондсем тума пулать.

Кăçалхи çул тырпул тухăçлăхĕ пысăк пулнă май, нумай колхозсенче продовольстви тата фураж фончĕсене, иртнĕ çулпа танлаштарсан, пысăкрах хисеппе тума палăртнă. Паллах, çакăн пек туни вăрçă вăхăтĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Колхозсенче тупăшсене валеççе панă чухне красноармеецсен семьисем çине ытларах çаврăнса пăхни кирлĕ. Колхозниксен пухăвĕ йышăннă тăрăх, çавăн пек çемьесене колхозăн общественăллă тупăшран пулăшу парассине йĕркелемелле.

Хальхи вăхăтра колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсене аванс шучĕпе тĕштырă, пахча-симĕçсем тата ытти продуктсем валеççе параççĕ. Планлă заданисене иртерсе тултарнисем аванс шучĕпе сĕт-çу, аш-какай тата ытти продуктсем илеççĕ. Сăмахран, Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри Прохорова доярка хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен планлă задани тăрăх 6444 литр сĕт суса илес вырăнне 12069 литр, Драгунина доярка 6839 литр вырăнне 11049 литр сĕт суса илнĕ. Сĕт суса илмелли плана иртерсе тултарнăшăн хушса тӳленĕ май, Прохорова 490 литр, Драгунина 449 литр сĕт илнĕ. Шăхасан районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри Г. Кушаков конюх тихасем пăхса çитĕнтермелли плана иртерсе тултарнăшăн 550 тенкĕ, Киров ячĕпе тăракан колхозри Войков конюх 350 тенкĕ илет.

Анчах, калас пулать, хăшпĕр колхозсенче аванс йĕркипе тĕштырă тата ытти продуктсем памалли йĕркене пăснă тĕслĕхсем палăраççĕ. Сăмахран, Октябрьски районри Тимошенко ячĕпе тăракан колхозра государствăна пĕр центнер памасăр аванс шучĕпе колхозниксене 219 центнер çĕрулми валеççе панă. Уйрăм колхозсенче тĕштырăсене колхозниксене вĕсене ĕçкунĕсем тăрăх мар, пурне те пĕр пек валеççе параççĕ. Çăкăн пек йĕрке пулмалла мар. Тĕштырăсемпе ытти тупăшсене колхозниксене хăйсем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем тăрăх кăна валеççе памалла.

Тупăшсене валеççе пама хатĕрленнĕ май, колхозсенче авăн çапассине тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарассине хăвăртлатмалла.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ çĕршыв умне тысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн колхозсен тата колхозниксен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени кирлĕ, фронтпа çĕршыв валли тырпул, аш-какай ытларах та ытларах парса тăмалла.

Колхозсенче тупăшсене валеçесси политикăллă тата хуçалăхлă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Тупăшсене тĕрĕс валеçни колхозсенчи общественăллă хуçалăха тĕреклетме, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳре вăйлатма пулăшать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç мĕнпур фронтсенче çапăçусем туса пынă.

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсен 4 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 4 самолетне персе антарнă.

* * *

Хĕвеланăç тата Кăнтăр фрончĕсенче çапăçакан пирĕн авиачăсем ноябрĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсенне 16 танк, пехота ларса пыракан тата çар грузĕсем тиенĕ 60 автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 55 лава, 25 мотоцикл, противник пехотине пĕр батальона çити тата кавалери взводне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Тула участокĕнче çапăçакан Миронов командирăн чăсĕсем юлашки тăватă кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çын ытларах пĕтерсе тăкнă, 7 оруди, 19 миномет, 300 мина ещĕкĕ, 38 пулемет, 200 винтовка ытла, патронсемпе гранатăсем нумай, икĕ радиостанци, 100 лаша ытла тата ытти çар снаряженийĕсене нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче тытăкăна илнĕ нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем Германи войскисем техника тĕлĕшпе те, чĕрĕвăй тĕлĕшпе те питĕ пысăк сухатусем тӳсни çинчен каласа параççĕ.

Тытăкăна лекнĕ нимĕç лейтенанчĕ Рудольф Бауре çапла каланă. «Нимĕç танкĕсен 9-мĕш дивизийĕнче 140 танкран 50 машина ытла мар тăрса юлнă. Кашни полкра вилнисемпе аманнисем 1000-шер салтак ытла шутланаççĕ».

103-мĕш мотомехполкри старший ефрейтор Фридрих Герберт допросра çапла каласа панă: «Вăрçа пула салтаксем питех те тарăхаççĕ. Дивизи чăсĕсенче дисциплина питех те начарланнă. Салтаксем офицерсене хирĕç тавлашаççĕ. Командирсен приказĕсене пурнăçа кĕртменнисем те час-часах пулаççĕ. Салтаксем совет боецĕсене вĕсем халиччен тĕл пулман чи хăюллă тата хастарăн çапăçакан боецсем тесе шутлаççĕ».

* * *

Малта пыракан машинно-тракторнăй станцисем ялхуçалăх çулне вĕçлеççĕ тата çуракине хатĕрленеççĕ. Ярославль облаçĕнчи нумай МТ Станцисем тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана чылай ирттерсе тултарнă. Судиславски машинно-тракторнăй станцинче 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа вăтам шутпа 320 гектар ытларах сухаланă. Артамонов бригади кашни машинăпа 400 гектара çити сухаланă. Алтайри Булалихински МТС 6,5 пин гектар кĕрхи çĕртме сухи сухаласа, плана 125 процент тултарнă. Тракторист Резцов 230 гектар, тракторист Алустов планран ирттерсе 60 гектар кĕрхи çĕртме сухи тунă. Казахстанри Силантьевски МТС тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри планран ирттерсе 2600 гектар сухаланă. тата 8 тонна ытларах горючи перекетленĕ. Семиозернăй МТ Станцинчи Жеребцов тата Шинкаренко трактористсем çулталăкри ĕçсен нормине икĕ хут ирттерсе тултарнă, 2500 килограмм горючи перекетленĕ.

Ноябрĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен Вершинин юлташăн авиачăсĕнчи летчиксем ноябрĕн 8-мĕшĕнчи çапăçусенче нимĕçсенне 6 танк, çар грузĕсем тиенĕ 150 автомашина ытла, 14 зенитнăй пулемет тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче тăпман танкĕсем атака туса килнĕ чухне, Усенко юлташ политрук пулса тăракан подразделенири боецсем тăпман машинисене хирĕç шуса пынă та çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем пăрахса, нимĕçсен икĕ танкне çунтарсанă. Никитенко юлташăн чăсĕ тăпман танкĕсен атакине хăюллăн сирсе пăрахнă. Старший лейтенант Верещагин истребительсен виçĕ группине организациленĕ, вĕсем гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем пăрахса, противникăн 7 танкне пĕтерсе тăкнă, ытти машинăсем каялла чакнă. Лопатинпа Сердюков красноармеецсем çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе нимĕçсен икĕ танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссин мĕнпур районĕсенче совет партизанĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан кĕрешӳ кунран кун ытларах вăйланать. Партизансен отрячĕн командирĕ пулса тăракан инженер Ш. юлташăн дневникĕнчен отрядăн октябрь уйăхĕнчи çапăçури ĕçĕсем çинчен калакан сыпăксене илсе пичетлетпĕр:

«Октябрĕн 24-мĕш. В. ялĕнче фашистсем лартнă сутăнчăка пĕтерсе тăкрăмăр.

Октябрĕн 26-мĕш. Вăрман хĕрринче чугунçул тĕмески патĕнче засада турăмăр. Цистернăсем турттарса каякан поезд çине пăшалсенчен петĕмĕр.

Октябрĕн 27-мĕш. Ялалла каякан çул çинче нимĕçсен карательнăй отрядне сыхласа кĕтсе илтĕмĕр, икĕ грузовой машинăна тата тепĕр çăмăл машинăна пĕтерсе тăкрăмăр. Нимĕçсен 17 салтакне, икĕ унтер-офицерне тата тепĕр лейтенантне леш тĕнчене ăсатрăмăр. Эпир фашистсенчен тытса илнĕ хĕпăшал пĕтĕмпех юсавлă пулчĕ.

Октябрĕн 28-мĕш. Нимĕçсен пысăк отрядне хирĕç кунĕпех персе тăтăмăр. Нимĕçсен 22 салтакне тата пĕр унтер-офицерне вĕлертĕмĕр. Каçхине хамăрăн геройсене Г. тата У. юлташсене пытартăмăр. Çапăçури юлташсене ĕмĕрлĕхе чап та мухтав!

Октябрĕн 29-мĕш. Ир умĕн Д. станци çине пырса тапăнтăмăр. Продовольстви тытса илтĕмĕр, нимĕçсен 13 салтакне тата икĕ офицерне пĕтерсе тăкрăмăр.

Октябрĕн 30-мĕш. Кĕпере взрыв туса аркатрăмăр. Нимĕçсен асап нумай пулать. Шыв урлă аяла каçма çук, пуртса лармалла пылчăк. Кăç пулас тĕле юханшыв патĕнче çĕршер машина пухăнса тăчĕ. Çакăн çинчен С. капитана пĕлтертĕмĕр. Антив хăнана вĕçсе килтĕр.

Октябрĕн 31-мĕш. Ир умĕн пирĕнниксем шыв хĕрринчи нимĕçсен çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Фашистла мерзавецсене нумай вĕлерсе пĕтернĕ. Юханшыв хĕрринче чăннипех те машинăсемпе урапасен масарĕ пулса тăнă.

* * *

Италин тĕрлĕ хулисенче Итали салтакĕсемпе нимĕç салтакĕсем хушшинче час-часах тытăçусем пулса иртеççĕ. Ноябрĕн 4-мĕшĕнче Кастелламмар хулинче Итали стрелокĕсен ушкăнĕ нимĕçсен икĕ офицерне тата виçĕ салтакне хĕненĕ. Нимĕçсем пăшалсенчен пеме пуçланă та тăватă итальянеца амантнă. Тытăçу пыракан вырăна çынсем чупса пынă та Итали салтакĕсене пулăшнă, нимĕçсем çине чулсем вăркăнтарнă. Хулара нимĕçсене вĕлернĕ пирки нумай çынсене арестленĕ. Салермо хулинче паллăмар çынсем нимĕç офицерĕсен, ресторанра лараканскерсен, ушкăнĕ çине пырса тапăннă. Ресторанăн уçă кантăкĕсем витĕр офицерсем çине чулсем вăркăнма пуçланă. Виçĕ офицера хытах амантнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXIV çул тултарнă ятпа СССР посольствисенче пулнă йышăнусем

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕн США-ри посольстви Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXIV çул тултарнă ятпа туса ирттернĕ йышăнура 2200 çын пулнă. Хăнасем хушшинче: финанс министрĕ Моргентау, суту-илӳ министрĕ Джонс, çĕрĕç министрĕ Гикард, почта министрĕ Уокер, генеральнăй прокурор Бидей, государственнăй секретарăн заместителĕ Уэллес, тинĕс министрĕн заместителĕ Форстон, çар министрĕн заместителĕ Патерсен, шалти ĕçсен министрĕн помощникĕ Чэмпен, 26 посольствăсемпе миссисен представителĕсем (вăл шутра Англи посланникĕ Кампбелл, Япони посолĕ Намура, Китай посолĕ Ху-Ши, Австрали посланникĕ Кексей, Югослави посланникĕ Хотич), Америка çарĕпе тинĕс-çар флочĕн паллă офицерĕсем 300 çын (вăл шутра тинĕс министерствин оперативнăй пайĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ адмирал Сендлей) тата Конгресăн нумай членĕсем: сенатăн ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Коннэлли, представительсен палатин ютçĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн представителĕ Блум тата паллă журналистсем, писательсем, ученăйсемпе интеллигенцин ытти представителĕсем нумай пулнă.

ТОКИО, ноябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXIV çул тултарнă ятпа Совет Союзĕн Токиори посольствинче йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура Японин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Того, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Миси пулнă. Çак йышăнурах Англи посолĕ Гри, дипломатиллĕ корпус членĕсем, тĕрлĕ çĕршывсен çар атташирсем, Японири культурăллă тата общественăллă организацисен представителĕсем, Японири тата ютçĕршывсенчи пичет представителĕсем, ютçĕршыв ĕçĕсен министерствипе Японин ытти министерствисенче ĕçлекен чиновниксем пулнă. Йышăнура пĕтĕмпе 150 çын ытла пулнă.

Турцин премьер-министрĕ г-н Рефик Сайдам И. В. Сталин юлташ патне янă салам

Унăн превосходительствине г-н И. В. Сталина, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне

Октябрь революцин уявĕ пулнă май Сире Республика Правительствин ячĕпе хĕрӳллĕн ырă сунса салам яратăп, çав салампа пĕрле хамран та салам калатăп.

Эпĕ Сиртен туслă Союза ырă сунăнне йышăнма ыйтатăп.

РЕФИК САЙДАМ.

Турцин премьер-министрĕ г-н Рефик Сайдам саламĕ çине И. В. Сталин юлташ пана ответ

Унăн превосходительствине г-н Рефик Сайдама, Турци республикин министрсен совечĕн председательне

АНКАРА.

Г-н Председатель, Октябрь революцин уявĕ пулнă май Эсир пире ырă сунса хĕрӳллĕн саламланишĕн эпĕ Сире Совет Правительствин ячĕпе тата хам ятпа тав тăватăп.

И. СТАЛИН.

Англири работницăсем ССР Союзĕнчи хĕрарăмсене саламлани

Лондонран, «Транспорт хауз», «Смит Сиуэр» предприятисенче ĕçлекен хĕрарăмсен организацийĕсен пĕрлешӳллĕ комитетĕнчен çăкăн пек телеграмма илнĕ.

ССР Союзĕнчи хĕрарăмсене.

Англири организованнăй работницăсен икĕ миллионлă йышĕнчен сире хĕрӳллĕ салам. Вăрçăн хаяр йывăрлăхĕсене геройла çирĕплĕхпе тата паттăрлăхпа тӳссе ирттерекенсене, сире, Англири хĕрарăмсем сирĕнпе пĕр шухăшлă, кăмăллă пулни çинчен тата сирĕн паттăрла кĕрешӳрен тĕлĕнсе савăнни çинчен пĕлтереççĕ.

Сирĕн нушасене пур енĕпе те тивĕçтерсе пырас тесе пулăшас шутпа енпир татах та хастарлăнрах ĕçлеме пулатпăр.

Вырăс тăванăмăрсем, салам сире! Эпир пĕрлĕхлĕ ĕçшĕн кĕрешетпĕр.

Пĕрлешӳллĕ комитет секретарĕ Мэри Сутерлад. (ТАСС).

ÇУЛПУÇĂН ВИТĔМЛĔ САМАХĔСЕМ ÇĔНĔ ÇĔНТЕРӲСЕМ ТУМА ЧĔНЕÇÇĔ

Шупашкарти предприятисенче

Мĕнпур ĕççыннисен юратнă çулпуçĕ, Оборонăн Государственный Комитетĕн Председателĕ Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада Шупашкарти предприятисенче, учрежденисенче ĕçлекен рабочисемпе совет интеллигенцийĕ малтан радио тăрăх итленĕ. Халĕ çав доклада, хăтсенче личетлесе кăларнă хыççăн, нумай çĕрте пухусемпе митингсенче вуласа тухаççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан фабрика коллективĕ Сталин юлташăн калама çук чаплă та витĕмлĕ самахĕсене ноябрĕн 9-мĕшĕнче перерыв вăхăтĕнче те тата каçхине ĕç пĕтсен ушкăнпа пухăнса вуласа тухнă. Вĕсем Сталин юлташăн докладне тĕплĕн ăнланса илсе, производствăра тата та лайăхрах ĕçлеме хавхаланнă.

«Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума!» текен лозунг кашни рабочин шухăш-кăмăлĕнче вĕресе тăрать. Вăрçă пуçланнăранпа çак лозунг коллективăн ĕç программи пулса тăчĕ.

Стахановка Лидия Киселева Сталин юлташăн докладне вуласа тухнă хыççăн çапла каларĕ:

— Пирĕн халăхăн юратнă çулпуçĕ, чаплă çĕнтерӳсен организаторĕ полководец Сталин юлташ отечественнăй аслă вăрçăн тăватă уйăх çурă хушшинчи итогĕсене тĕплĕн анализ туса пачĕ. Унăн кашни самахĕ пирĕн чĕресене кĕрсе вырнаçрĕ. Халĕ эпир, тылра ĕçлекен мĕнпур рабочисем, Хĕрлĕ Çара татах та ытларах пулăшса тăрăпăр. Кашни çынăн çăкна асра тытмала: Хĕрлĕ Çар çинчен унăн пĕр минутăлăха та манмалла мар. Кашни ĕç фронта пулăшассипе, тăшмана çĕмĕрсе тăкассипе тачăн сыхăнса пымалла. Гитлер хăйĕн вăрă-хурахла кĕтĕвне Мускава пырса кĕме хĕтĕртет. Анчах фашистсем темĕн пек тăрмашсан та пирĕн Хĕрлĕ Çар çирĕп тăнине тĕл пулаççĕ. Сталин ертсе пыракан пĕтĕм совет халăхĕ пĕр çын пек пулса тăван çĕршыва хӳтĕлеме çĕкленчĕ.

«Красный кустарь» артельре виçĕмкун заняти пĕтсен пĕри те килĕсене саланман. Сталин юлташăн докладне пичетлесе кăларнă çăкăнсене пĕрин аллинчен тепри илсе вуланă. Каçхине скорняжнăй цехра рабочисен пухăвĕ пулнă.

Артеле организациленĕ кунранпах ĕçлекен ватă рабочи-специалист Александр Васильевич Гусев юлташ пурне те хумхантаракан сăмах каларĕ.

— Халĕ ĕнтĕ Гитлерăн вăрçăра «çиçĕм пек хăвăрт» çĕнтерес планĕ арканса кайрĕ. Вĕсем сивĕ çĕрте вилĕм тупăç. Сталин юлташ каланисем пире татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Пирĕн пур ĕç те фронтпа çыхăнса пымалла. Эпĕ хам енчен малалла тата вăйлăрах ĕçлесе пыма сăмах паратăп.

«Красный кустарь» артельри стахановецсем Колов, Тимакова, Сахарова юлташсем куллен икшер норма тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем малашне те нормăна ӳстерсе пыма обязательствăсем илчĕç.

Н. ЮМАНГАЙ.

Сталин юлташ докладне ăнлантарса параççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, ноябрĕн 11-мĕш. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Кзыл-Чишмари «Маяк» колхоз членĕсем тата тулли мар вăтам шкулти учительсем ноябрĕн 7-мĕшĕнче Сталин юлташ докладне итлеççĕ. Çулпуçăн ăслă сăмахĕсене итленĕ хыççăн, пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек хăвăрт тата лайăх туса пыма кирлине, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота татти-сыпписĕр пулăшса тăма кирлине татах та лайăхрах ăнланса илчĕç. Чылай колхозниксем, учительсем Сталин юлташ докладне ырласа, кĕске те чĕрĕ сăмахсем каларĕç. Колхозри чи лайăх бригадир Латыпов юлташ Сталин юлташ докладчĕ пирки çапла каларĕ:

— Оборонăн Государственный Комитет Председателĕн Сталин юлташăн докладчĕ—пĕтĕм совет халăхĕн хальхи вăхăтри программи пулса тăрать. Аслă Ленин çул кăтартса пынипе эпир граждан вăрçинче çĕнтертĕмĕр. Ленинăн чи пултаруллă ученикĕ Сталин юлташ ертсе пынипе эпир çак йывăр вăрçăран та çĕнтерӳçĕсем пулса тухăпăр.

— Сталин юлташ сăмахĕ колхозниксене фронт валли ытларах тырă, аш-какай, сĕт-çу пама хушать. Эпир ку тариннчен оборона фондне 32 центнер тырă, 1 тонна аш-какай, 3000 литр сĕт панă. Кирлĕ пулсан тăван çĕршывăн хамăран пурнăçăмăра та пама хатĕр,— тет ферма заведующийĕ Мальсербер Гайнуллина юлташ.

Ялти агитаторсем, вулавçăсем Сталин юлташ докладне колхозниксемпе шкул ачисем хушшинче тĕплĕн ăнлантарса парас ĕçе тытăнчĕç.

Киргизия çĕрмамăкĕ хатĕрлемелли çулталăкри плана тултарнă

ФРУНЗЕ, ноябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Киргизия çĕрмамăкĕ хатĕрлемелли çулталăкри плана тултарнă. Иртнĕ çулпа танлаштарсан, кăçал çĕрмамăкне икĕ хут ытларах пухнă. Вунпĕр звено гектартан çĕршер центнер тата унтан та ытларах туса илнĕ. Плана срокчен тултарни — сборщик-двухсотниксемпе трехсотниксен паха ĕçĕсен результачĕ. Чылай колхозсенче, вăрçăччен хăхăтпа танлаштарсан, çĕрмамăкĕ пухмалли нормăна икĕ хут ӳстернĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра 35 килограмм выранне сборщикăн кунне 70 килограмм памалла пулнă. Анчах çак нормăсене те вăрçă вăхăтĕнче тăватăшĕлĕк хут ирттерсе тултарса пынă. Базар-Курыганski районри «Кенеш-Куча» колхозри çĕрмамăкĕ пухакан Ханипахан Джапарова стахановка пуринчен те малта пырать. Халĕ ĕнтĕ вăл çĕрмамăкне 17-мĕш тонна пухать. Вăл сезонри нормăна тăватă хут ытларах тултарнă.

Нумай колхозсем премиленадбавка шучĕпе илнĕ укçасене оборона фондне хывасçĕ. Аразански районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз оборона фондне 40 пин тенкĕ, Ош районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз 22 пин тенкĕ панă. Çĕрмамăкĕ пухасси тата государствăна парасси малалла та пулса пырать.

268 (5983) №, 1941 ç., НОЯБРЬ 13.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен ноябрĕн 11-мĕшĕнче пулса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ С. А. Лозовский юлташ Совет Союзĕнче тытăнура пурăнакан немĕç салтакĕсен октябрĕн пуçламĕшĕнче пулнă пĕрремĕш конференцийĕ çинчен ютçĕршыв корреспонденчĕсене пĕлтернĕ.

Çавăн пек конференцие иртнĕренпе тытăнура пурăнакан темиçе антифашист — Берлинран, Гамбургран тата Рур облаçĕнчен килнĕ немĕç ĕççынни-кĕçĕм сĕнӳ панă. Конференцире немĕçсен 158 салтакĕ пулнă, вĕсем немĕç халăхĕн мĕнтĕр сийĕсен представительĕсем пулса тăрасçĕ.

Конференцие Штуттгарт патĕнчи Леонберг ятлă вырăнтан килнĕ старший официант Георг Циммер уçнă. Кун пирки-не пĕр ыйту: «Гитлер пуçарнă тискер вăрçа мĕнле пĕтерсе лартасси çинчен» тăнă. Гельмут Флешнер салтак, мĕнтĕр немĕç салтакĕсене тата немĕç халăхне чĕнсе, сăмах тухса калана.

«Пире ирĕксĕрлесех Советлă Россине хирĕç вăрçа кăларса ячĕç, Совет çĕршывĕнче капиннех хăйĕн тăван çĕршывне хӳтлет. Халĕ, Совет Союзĕпе Англия тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пĕр пулса çак виçĕ аслă державăсем хăйсен вăрçăна хуçалăх тĕлĕшĕнчи вăйăсене Гитлера çапса хуçма пĕрлештернĕ çăмтăк, халăхи вăрçăра Германи çăмтăрес çукки тата вăрçма пирĕн нимĕнле сăлтав та çукки уçăнах паллă. Вăрçă сăлтавĕсене ку таранчченех ăнланса илменнисен халĕ: мĕншĕн эпĕ малти позицисенче пылчăк ăшĕнче йăваланса выртрăм, мĕншĕн эпĕ окопсенче тăтăм, камшăн Советлă Россия çине тапăнмалла, камшăн кунта çаратмалла, камшăн кунта çĕрсем гуртса илмелле, тесе шутлас пулать. Немĕç рабочийĕшĕн мар, тесе шутлатăп эпĕ. Немĕç рабочийĕшĕн çак вăрçа пула катастрофа çеç сиксе тухма пултарать. Çак вăрçă усăсăр вăрçă пулнă пирки те эпир ăна пĕтерсе лартасшăн. Немĕç ĕççынни-нийĕн сасси, мĕнтĕр тӳрĕ кăмăллă немĕçсен сасси халĕ рабочисен лăпкă каласăвĕсенче кăна кăштах илтĕнет. Гитлер пуçарнă вăрçа халех пĕтерсе лартассишĕн тăракан кашни ĕççынни-нийĕн тивĕçĕ — çак сасса пур предприятисене те, пур ялсене те, войскăсен пур чăçĕсене те, — кĕскен каласан, Гитлер пуçарнă ăссăр вăрçа пула хĕн куракан немĕçсем пурăнакан пур вырăнсене те кĕрсе кайма пулăшасси пулса тăрать».

Флешнер сăмахĕ хыççăн тата Леонбергран килнĕ Георг Циммер, Вютембергран килнĕ Рудольф Цвительгофер, старший стрелок Оскар Эриксон, гитлерла çамрăксен союзĕн членĕ пулнă баптрак Генрих Классен, хресчен Освальд Пауль, пекарь Ганс Прессен, Эдуард Биринге тата ытти-сем те Гитлера ушăн вăрăнине хирĕç çулăмлă сăмахсем тухса калана. Хыççăн, немĕç халăхне чĕнсе çырнă декларацие вуласа панă, ăна пурте пĕр саслă пулса йышăннă. Декларацире çапла калана:

«Немĕç халăхне Гитлер хĕнхур тăвартнă тата асаплантарнă пек никам та хĕн кăтартса асаплантарман. Хăйĕн çĕршывне юратакан тата вăл ирĕклĕ те телейлĕ пулăр тесе тăрăшакан кашни тӳрĕ кăмăллă немĕçĕнех Гитлера поражени кӳме тулăшмалла. Немĕç халăхĕ Гитлера сирпĕтсе антарассишĕн кĕрешес ĕçе çăмăллатас тесен, Гитлера поражени кӳни çирлĕ». Çак документ-тăн вĕçĕнче çапла калана. «Тĕп пултăр вăрçă, тĕп пултăр Гитлер! Сывă пултăр ирĕклĕ, никама пăхăнман Германи!»

Конференцие хупнă чухне Флешнер çапла калана:

«Немĕç салтакĕн халĕ пĕр шухăш, пĕр кăмăл кăна: ирĕр вăрçа пĕтерсе лартса, хăвăртрах арăмпа ачасем патне Германие тавăрăнасси. Адольф Гитлерăн хальхи чи пысăк преступленине май пур таран хăвăртрах пĕтерсе лартмалла. Пуринчен малтан эпир хамăр нацистла суялăхпа нацизтла шухăш-кăмăлран хăтăлни пирĕн кирлĕ. Гитлер поражени тӳсни немĕç халăхĕ поражени тӳскине пĕлтермест, анчах мĕнтĕр немĕç ĕççынни-йĕсен вĕсем Гитлерпа пĕр çул тытманнине тата унăн ирĕр вăрçишĕн тăманнине кăтартса парать. Сывă пултăр пирĕн тăван тата кӳршĕ — совет халăхĕ!»

Ютçĕршыв корреспонденчĕсене немĕç военнопленнăйĕсен пĕрремĕш конференцийĕ çинчен тĕплĕн çырнă отчета, немĕç халăхне чĕнсе калакан декларацие валеçсе панă, немĕçсен 158 салтакĕ алă пуснă декларацин алçырăвне кăтартнă тата 158 салтак алă пуснине фотокарточĕсене валеçсе панă.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ: Китай Европăри фронтра кĕрешме Совет Союзне Китайри кулисемпе салтаксене 100 пин çын ярса парать тесе Домей Цусин агентствипе пĕлтерни çинчен эпир мĕн шухăшлатăр, тесе ыйтни çине Лозовский юлташ çапла ответленĕ: «Çав пĕлтерӳ ăссăр та тăмсайла шухăшласа калăрнă япала пулса тăрать, тесе шухăшлатăп эпĕ. Домей Цусин агентствин çав пĕлтерĕвĕ чăнлăха нимĕн чухлĕ те сыхăнса тăмасть. Вăл малтан пуçласа вĕсене çитиех шухăшласа калăрнă япала.

Финляндин тĕлĕшпе г. Хэлл тунă заявленипирки эпир мĕн пĕлетĕр, тесе чылай корреспондентсем ыйтни çине ответлесе Лозовский юлташ çапла калана: «Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн г. Хэллăн заявленийĕ пирки немĕç печеĕ урса кайсах кăшкăрашни г. Хэлл Германи правительствине чылаях вăйлăн пырса çапнине кăтартса парать. Финляндишĕн вăрçă часах пĕтет тесе Финлянди правительстви тунă заявлени çинчен калакан пĕлтерӳсем тухнине илес пулсан вара — çак заявление икĕ майлă ăнланма пулать, мĕншĕн тесен Финляндин правительстви, вăл хăй Германие пăхăнса тăнă пирки, г. Хэллăн тӳрĕ сĕнĕвĕ çине тӳрĕ ответ пама шутламарĕ».

Чылай корреспондентсем — Стил, Шапиро, Сузбергер, Джордан, Магидов т. ыт. те — фронтсенче тата уйрăмăнах Мускавпа Ростов патĕнче ĕç мĕнле тăрать, тесе ыйтни çине Лозовский юлташ çапла ответленĕ: «Юлашки эрнере Мускав патĕнчи положени лайăхланчĕ. Немĕçсем малалла каяссине чарса лартнă кăна мар, тата совет войскисем куçран кунах контратакăсем туса, Германи çарĕн чĕрĕ вăйĕпе техникапе питех те пысăк сухатусем кӳреççĕ. Можайск, Волоколамск тата Мало-Ярославец енĕсенче, Тула патĕнче немĕçсем малалла каяймаççĕ, унта вĕсем пысăк сухатусем тӳсеççĕ.

Ростова илес пулсан, кунта вара Таганрогпа Ростов хушшинче çапăçусем питех те вăйлăн пулса пыраççĕ, анчах немĕçсем, пысăк сухатусем тăвaççĕ пулин те, малалла каяймаççĕ».

Нимĕçсен обороннине флангран хăватлăн пырса çапни

ТУЛА ЕНĔ, ноябрĕн 11-мĕш. Тулăпăн пыракан кĕрешӳ юлашки кунсенче татах та ытларах хаярланчĕ. Германи çарĕсен командованийĕ кунта çĕнĕ вăйсем пухса килнĕ. Сăмахран, Гудериан генералăн 17-мĕш тата 18-мĕш танковăй дивизийĕсене Брянск патĕнче çапса çĕмĕрнĕ хыççăн çĕнĕрен пĕтĕçтерсе йĕркеленĕ, çакăнтах мотопехотăн темиçе дивизине, минометсемпе авиацине нумай йышлăн хутшăнтарнă. Çакă вăл немĕçсене хулана тытса илес шутпа çĕнĕрен хăтланса пăхма май пачĕ. Анчах та халĕ немĕçсен тактики улшăннă: вĕсем, малтанхи вунă кун хушшинчи пек, Тулана кăнтăр енчен тӳрех пырса атакăлама пăрахрĕç. Юлашки кунсенче немĕçсем пирĕн чăсене кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче тата Туларан сурçĕр-хĕвеланăç енне рен атакăлаççĕ. Ермаков тата Сорокин командирсен чăсĕсем тăшманăн çĕнĕ атакисене хирĕç ăнăçлăн тăрса çапăçаççĕ.

Ноябрĕн 9-мĕшĕнче, 10-мĕшĕнче тата 11-мĕшĕнче немĕçсем пирĕн войскăсене юханшыв урлă каçмалли вырăнта уйрăмах вăйлăн хĕнĕ. Çав виçĕ кун хушшинче немĕç пехотин 19-мĕш тата 31-мĕш дивизийĕсем шыв урлă каçмалли вырăна 15 хутчен атака туса пăхнă.

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче немĕçсем шыв урлă каçмалли вырăнсене татах та пысăкрах вăйсемпе тапăнса пырса атакăланă. Пирĕн подразделенисен кăштах каярах чакма лекнĕ.

Иртнĕ талăкра пулса иртнĕ событисенчен чи паллăрахси вăл Фофанов юлташăн чăсĕсем тунă контратака пулса тăрать. Артиллерипе тата танксемпе таччăн сыхăнса тăрса, Фофанов юлташăн пехотинецĕсем немĕç войскисен группировкине, Тула хулин кăнтăр хĕрринче вырнаçса тăраканскерне, флангран пырса çапнă. Çавăрса илсе-синчен хăраса, немĕçсен подразделенийĕсем хĕçпăшалсемпе боеприпассене пăрахса хăварсах тарма пуçланă. Тараканнимĕçсен кĕтĕвĕ пирĕн артиллеристсемпе пулеметчиксемшĕн питех те лайăх мишень пулса тăнă, пирĕн боецсем кунта вара чаплăн ĕçленĕ.

Туларан 8 километра çити кайсан тин, Рогоженский поселокра, темĕнле немĕç генералĕ фашистсен тăватă батальонăн юлашкийĕсене аран-аран тытса чарса пухма пултарнă, анчах ку нумайлăха пыман: Фофанов юлташăн чăсĕ, противник хыççăн хăваласа пырса, поселока та атакăланă. Немĕçсем поселокран та тарса тухнă. Кунта немĕçсен автомашинăсемпе çĕнĕ вăйсем килсе çитни кăна фашистсене кăштах сывлăш сăвăрма май панă. Немĕçсем чарăнмă та оборонăна йышăннă. Фашистсем тарнă çул çинче немĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 500 вилли ытла, аманнисем питĕ нумай, 100 винтовка ытла, çĕмĕрлĕ икĕ танк, 32 пин патрон, 400 граната, танксене хирĕç пемолли 8 пăшал, 2 пулемет, зенитнăй икĕ оруди, 2 тягач, салтаксен харпăрхăй яналисем тата 3 батальон штабĕнчи пурлăхсемпе документсем питех те нумай-вырăс юлнă. Пирĕн чăсем немĕçсенне 25 танк çапса çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă.

Енерпе паян авиаци ик енчен те пысăк активлăхпа çапăçăва хутшăннă. Немĕçсем пуринчен ытларах пирĕн коммуникацисене тата мирлĕ объектсене атакăланă. Пирĕн авиаци немĕçсен фронт патнелле килекен резервĕсем çине тата вĕсен аэродромĕсем çине массăллăн вĕрсе пыра-пыра çапнă.

Çакна каламалла, Тула енчи кăнтăр участокĕнче çапăçусем питех те вăйланса кайрĕç. Пирĕн войскăсем хирĕç тăнине немĕçсем кирек мĕнле майпа та пулин çĕмĕресшĕн. Çавăнпа та эпир тăшмана паракан отпор татах та вăйлăрах, татах та çирĕпрех пулмалла.

Старший политрук **ФРОЛОВСКИЙ.**
(«Правда», ноябрĕн 12-мĕш).

ПУРНЕ ТЕ ÇАР ЁÇНЕ ВЁРЕНТЕССИ

ВЁРЕНӲРЕ

ЕТЁРНЕ. Ирçери пунктра вёренӳн малтанхи кунĕнчен пуçласах коммунистсемпе комсомолецсем пример кăтартаççĕ. Политзанятисем иртнинĕ çĕре политруксемсĕр пуçне коммунистсемпе комсомолецсем те активлăн хутшăнаççĕ. Коммунист Я. Трофимовпа комсомолец Г. Иванов час-часах политзанятисем иртереççĕ.

Кашни взводра икĕ кунта пĕрре «Боевой листокĕсем» тухаççĕ. «Боевой листокĕсен» редакторĕсем пулса Я. Трофимов, Ф. Краснов, И. Перфилов, Г. Иванов юлташсем ĕçлеççĕ, вĕсемех групповодсем пулса тăраççĕ, перерыв вăхăтĕнче боецсене çĕнĕ хаçатсемпе журналсем вуласа параççĕ, фронтри çапăçу эпизочĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ.

Вёренӳ пунктĕнче «За родину» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Ку таранчен тухнă виçĕ номерте малта пыракан, дисциплинăна çирĕп пăхăнса тăракан боецсен примерĕсене çутатса, ытти-сене вĕсем пек пулма вёрентесе сырнă статьясем чылай. Стена хаçачĕ çине çырса тăракансен йышĕ те ӳссе пырать.

Комсомолец-командирсемпе боецсем вёренӳре малта пыраççĕ. Взвод командирĕ комсомолец Николай Христофоров пур çĕрте те пример кăтартса ĕçлет. Боецсене пĕлӳ парас çĕре хăйĕн пĕтĕм вăйне хурать. Унăн взвочĕ—малта пыракан взвод, Взводри Н. Токарев, И. Сафайлов, А. Спиридонов боецсем çар ĕçне вёренессинче отличниксем пулса тăраççĕ.

Халĕ вёренӳ пунктĕнче тактикăлла занятисем пулса иртеççĕ. Унта та комсомолецсем малта пыраççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ,
И. ЛЬВОВ.

Пулемета тата автомашинăна вёренеççĕ

Етёрнерти çу çапакан заводри рабочисен клубĕнче станковăй пулемета вёренекенсен кружокне уçнă. Кружокра 35 çамрăк вёренет. Вёсем кружока йĕркеллĕ çӳреççĕ. Пулемета вёренессипе питĕ интересленеççĕ.

Çавăн пекех клубра автомашинăна вёренекенсен кружокне те уçнă. Унта 37 çын вёренет. Кружок занятийĕсем эрнере виçĕ хут пулаççĕ.

В. ЛАЗАРЕВ.

Нацистсен пичечĕ ирĕксĕр йышăнни

СТАМБУЛ, ноябрĕн 10-мĕш. (ТАСС) Гитлер çĕнĕ наступлени пуçласси çинчен пĕлтерĕнеппе пĕр уйăх иртрĕ. Гитлер шухăшĕпе çак наступлени Германие татăклă çĕнтерӳ патне илсе пымалла пулнă. Çак çĕнтерӳзе сыпăнсен Гитлер хăйĕн çĕршер пин салтакĕсен пурнăçне çухатнипе тума шутланă. Паллă ĕнтĕ, çав жертвăсем пулчĕç, анчах çĕнтерӳ тума ĕмĕтленни юмах кăна пулса юлчĕ. Совет халăхĕ вăйлăрах та вăйлăрах отпор парать. Çакна пĕрмаях çĕнтерӳсем çинчен палкакан Германи печĕн те ирĕксĕрех йышăнма тивет. Октябрĕн 16-мĕшĕнче, Гитлер сăмах тухса калана хыççăн икĕ эрнерен, артиллери генералĕ Людвиг «Донау Цейтунг» хаçатра (Белград) шантарнă çĕнтерĕве хăçан тăвасси çинчен каласа, ыйтăва сӳтсе-явасси çинчен пурнăçа кĕртесинчен сăмăлтарах, тесе çырнă.

Нацистсен Прагăра тухса тăракан «Дер нейе таг» хаçат октябрĕн 15-мĕшĕнче пичетленсе тухнă умстатья: Англие татăклăн çĕнтерес пулсан, Хĕвеланăçĕнче çапăçассисĕр пуçне Хĕвелтухăçĕнче малашне пулас çапăçусем умра тăраççĕ, тесе пĕлтернĕ. Хаçат çав вăхăтрах Хĕвелтухăç фронтĕнчи çапăçу халиччен илтмен вăй-хăват ыйтать, тесе паллă тăвать.

Фашистла Германин пуçлăхĕсем октябрĕн пуçламĕшĕнчех: совет çарне тĕппипех çапса аркатнă, тесе васкавлăн пĕлтерчĕç. Чăннипе илсен, ку пĕлтерӳ пурнăçпа пачах та çыхăнса тăмасть, вăл тĕрĕс марри çинчен фашистсен хăйсен хăçачĕсем те çыраççĕ. Немĕç корреспонденчĕсенчен пĕри Болгарири «Дневник» хаçатра октябрĕн 24-мĕшĕнче Хĕвеланăç енчи çапăçусем çинчен çакнашкал корреспонденци пичетлесе калăрнă: «Яланхи пекех, Совет войскисем халĕ те паттăрăн та хăюллăн хирĕç тăраççĕ». Турцири немĕç посольствин органĕ «Тюркише пост» хаçат октябрĕн 31-мĕшĕнче немĕçсен корреспонденчĕ Мускав патĕнчи çапăçусем çинчен çырса кăтартать: Европăри пĕр салтак та çапăçма пултарайман условисенче те красноармеецсем çапăçма пултараççĕ; çапăçма шанчăк çук чухне те вĕсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ, чеелăхпе усă курааççĕ. «Çакăн пек тăшмана хирĕç,—хуйхăллăн çырать автор,—немĕç салтакĕсен çапăçма лекет».

Малтанхи юр ӳкнĕ хыççăн пулса иртнĕ çапăçусем çинчен «Дер нейе таг» хаçатăн корреспонденчĕ октябрĕн 31-мĕшĕнче çапла çырса кăтартать: «Большевиксем питĕ хăюллăн хирĕç тăраççĕ. Кирек мĕнле окопа та, кирек мĕнле траншейăна та хаяр çапăçусем хыççăн тин çавăрса илме лекет. Фашист салтакĕсене уйрăмăнах совет танкĕсен контратакисем хăратаççĕ.

Италин шалти пĕложенийĕ çивĕчленсе пыни

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: лайăх пĕлсе тăракан çынсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, Германи полицин Италири тĕрекĕ хальхи вăхăтра Фариначчи пулса тăрать. Вăл кăтартусене тӳрремĕнех Гитлертан илет тата Муссолинине пăхăнмасăр тӳрех Берлинпа сыхăнса тăрать.

Гитлерпа Муссолини хушшинчи отношенисем йывăрланса çитнĕ. Август уйăхĕн вĕçĕнче Гитлерпа тĕл пулса калаçнă чухне Муссолини Италин пĕр миллион салтакне хĕвелтухăç фронтне яма хăй çине обязательство илнĕ. Анчах вăл çав обязательствăна пурнăçламан. Итали салтакĕсене фронта сахал япине пула, çавнашкалах вĕсене ăсатасси чарăнса тăнине пула Гитлер кăмăлсăр пулнă. Каярахпа вара Итали войскисене фронта ярасси пачах чарăнса ларнă.

Муссолини тӳрĕ кăмăллă пулманăн тата вăл хăйĕн чĕрĕ вăйĕсене ертсе пыма пултарайманшăн Гитлер ăна айăплама пуçланă. Ун хыççăн Гитлер Фариначчипе калаçма пуçланă тата ун умне Италие фашистла парти енчен пĕтĕмĕшпех контроль туса тăрас задача лартнă.

Итали войскисене совет фронтне ярасси чарăнса ларнин сăлтăмĕсем паллах мар. Фашистсене хирĕçле шухăшкăмăлсем ӳссе пыни тата Италире вăрçă пирки халăх тарăхăвĕ ӳссе пыни фашистла руководствăна хăратса ӳкернĕ, тесе шутлаççĕ. Фариначчи хăйĕн ĕçне çине тăрса туса пырать. Вăл вырăнсенче правительство чиновникĕсене массăллăн кăларса улăштарма тытăннă. Государство тата муниципальнăй чиновниксене нумай хисеппе Сицилирен материк çине ăсатнă. Ютçĕршыв чиновникĕсем пурте—фашистла партин тăхăнхи членĕсем.

Италирен юлашки вăхăтра пĕлтерĕнĕ тăрăх, унта шалти пăлхану ӳссе пырать тата экономикăллă лару-тăру хăвăрт начарланать. Аслă тата вăтам классем вăрçă Италишĕн инкекллĕ вĕçленет тесе шутлаççĕ, çĕршывра взрыв пуласран шикленеççĕ

Уилки выступленийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Нью-Йоркри корреспонденчĕ пĕлтерĕнĕ тăрăх, республикăллă партирен президента суйлама тăратнă кандидат пулнă Уилки радио тăрăх Польша валли ятларласа сăмах тухса калана. Уилки хăйĕн сăмахĕнче çапла шĕлтерĕнĕ: хальхи вăхăтра Америкăри тата Англири авиаци промышленноçĕ самолетсем Германире тата вăл контролльесе тăракан çĕршывсенче кăларнинчен ытларах кăларать, — тенĕ. Тепĕр çултан Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем виçĕ хут ытларах самолетсем кăларма пуçласçĕ. Польша халăхне хальхи вăхăтри чухнехи мăшкăла паттăрăн тӳссе ирттерме чĕнсе, Уилки малалла çапла калана: Америкăпа Англи çар флочĕсем Атлантика океанĕн тӳçисем пулса пыраççĕ тата Германипе Итали флочĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе пыраççĕ, — тенĕ. «Тĕнчери демократилле вăйсем çитес сывăх вăхăтсенчех тинĕсре те, çавăн пекех сывлăшра та пушпулса тăрассине эпир шанатпăр. Ирĕклĕх хăвăртраххӑн та хăвăртраххӑн сывхарса килет. Мĕнтĕр тĕнчери миллионшар ирĕклĕ çынсем, çав шутрах 130 миллионлă американецсем те, сире чуралăх сăнчăрĕнчен хăтарма шут тытрĕç. Америка пĕр решени патне хăвăрттăн сывхарса пырать: нацизм харушлăхне мĕнтĕр тĕнчере сирсе пăрахмалла. Çав решение йышăнсассăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи индустрин мĕнтĕр хăватне ĕçе ярсассăн, ун чухне вара нацистла вăрă-хурахсен çĕнрепе йӳçĕтсе хăпартнă вăй-хăвачĕ пирĕн вăй-хăвата хирĕç тӳссе тăраймĕ».

Англи авиацийĕн 6 уйăх хушшинчи ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин çапла палăртать: май уйăхĕнчен пуçласа октябрь уйăхне çитичченех, урăхла каласан, 6 уйăх хушшинче Англи бомбардировщикĕсем немĕçсем оккупацинелĕ территорисем çине 20 пин тонна бомбăсем пăрахнă. Çыранри оборона самолечĕсемпе истребительсем неприятелĕн 332 суднине путарнă е сиен кӳнĕ. Çакă вăл Германи судоходствине, немĕçсен хĕвелтухăçĕнчи тата хĕвелтухăçĕнчи войскисене снабжени тăратас ĕçе аяла те аран туса пыраканскерне, вăрçă пуçланнăранпа чи йывăр сухату кӳни пулать.

Англи истребительсемпе çыранри оборона самолечĕсем союзниксен судниссене сыхлас тĕллĕпе 10 пин вĕрсе туса, Англипе Россипа Америкăран тавăрсем тăратас ĕçе чылаях пулăшса пынă. Англи авиацийĕ немĕçсенне 1.152 самолет пĕрсе антарнă, çаксемпе пĕрле немĕçсен 2.882 летчикĕ пĕтнĕ.

Англи авиацийĕн 1.086 самолет пĕтнĕ.

Агротехника енĕпе хĕллĕ тумалли ĕçсем çинчен

Партипе правительство ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени-пе хавхаланнă колхозсем тата колхозниксем 1941 çулта çĕнĕ çĕнтерӳсем турĕç. Германи фашизмĕ пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăннине хирĕç колхозлă хресченсем производствăра халиччен пулман пысăк çĕкленӳ тунине ответлерĕç. Колхозсен уйхирĕсенче ваттисем те, çамрăксем те ĕçлерĕç. Елчĕк районĕнчи «Красный партизан» колхозри 72 çулхи К. Матвеев пĕр ĕçрен те юлман, колхозăн ответлă ĕçĕсенче ĕçленĕ, вăл 315 ĕçкунĕ тунă. 67 çулхи Н. Ильин колхоз уйхирĕнче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе 206 ĕçкунĕ, шкул ачи Валя Чернов çитĕннисен ĕçĕнче ĕçлесе 236 ĕçкунĕ тунă.

Ялхуçалăхĕнчи стахановецсен йышĕ тата вĕсен производствăллă показателĕсем ӳсрĕç. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри С. Емельянов тата Портнов юлташсем ПДО-34 машинăпа кунне 8-шар тонна авăн çапас вырăнне 20—22-шер тонна çапнă. «Комбайн» колхозри Блинов юлташ МК-1100 молотилкăпа нормăпа кунсерен 10 тонна авăн çапас вырăнне 25 тонна çапать. Улатăрти машинно-тракторнăй станцинчи Брейкин комбайнер кашни кунах 17 гектар çинчи тырпула пуçтарса кĕнĕ.

Çакăн пек стахановецсене нумай илсе кăтартма пулать. Çак примерсем колхозлă хресченсен патриотизмне уçăн кăтартса параççĕ.

Пиншер колхозниксемпе колхозницăсем, çĕршер звеносемпе бригадăсем кăçал планлă заданисене иртерсе тултарнăшăн тĕштырă, вылăх-чĕрлĕх продуктивноçĕ те ӳсет. Улатăр районĕнче 1940 çулта кашни ĕнерен 1094 литр сĕт суса илнĕ пулсан, кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче 1321 литр, Çĕрпӳ районĕнче 1940 çулта кашни ĕнерен 700 литр суса илнĕ пулсан, кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче 910 литр ытларах, Комсомольски районра 1024 литр, Çĕмĕрле районĕнче 1104 литр сĕт суса илнĕ.

Тихăсем, путексем пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе те ĕçсем начар мар. Кăсал кашни 100 сурăхран 135 путек ытларах илсе çитĕнтернĕ.

Çак примерсемпе фактсем Чăваш республикинче социализмлă ялхуçалăхĕ чылаях вăйланса ӳснине кăтартса парассĕ. Çав çитĕнӳсене агротехникăллă тата зоотехникăллă мероприятисене вăхăтра та тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынине пула туна. Колхозсен уйхирĕсене пурĕ 1.520.000 тонна тислĕк, 500.000 тоннăна яхăн торф, 45.551 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 66.370 центнер кĕл, 3.450 тонна минерал удобренисем кăларнă. 180.000 гектар çинче юр тытса хăварнă.

Республикăри чылай колхозсем ялхуçалăх çулне вĕçлесе çитерчĕç. Çĕршер колхозсем гектартан çĕршер пăт тата унтан та ытларах тĕштырă туса илчĕç. Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз вăтам шутпа гектартан 20 центнер, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 17 центнер тĕштырă туса илнĕ.

Тăван çĕршыв çĕрĕç органĕсенчи работниксене ялхуçалăхĕ çине ытларах çавăрăнса пăхма хушнă. Тырпулăн кĕрешни—тăван çĕршывăн кĕрешни. Çакăн пек лозунгпа ĕçлемелле çĕрĕç органĕсенчи работниксен. Халĕ агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене сарса пымалли тапхăр пуçланнă. Кашни специалистăн, колхоз председателĕн, бригадирăн, ферма заведующийĕн агротехника мероприятийĕсене пирки халех татăклăн шухăшласа пăхмалла, практикăллă мерăсем палăртмалла.

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ 1942 çул валли агротехника енĕпе хĕлле тумалли ĕçсен планне çирĕплетрĕç. 1942 çулта тĕштырăсем акмалли лаптăксем çине 2 миллион тонна тислĕк, 800 пин тонна торф кăлармалла, 80.000 центнер кĕл, 50.000 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 13.500 тонна известь хатĕрлемелле. 200.000 гектар çинче юр тытса купалантармалла. Вăл шутран щитсемпе 28 пин гектар тытмалла, çавна май 418 пин штука щит хатĕрлемелле. ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком щитсем хатĕрлеме колхозсене 16.720 кубла метр йывăç тата 4180 кубла метр çапă пама пăхнă. Çапла ĕнтĕ çĕрĕç органĕсенчи работниксем умне ответлă та пысăк задачăсем лартнă. Çав задачăсене ăнăçлăн татса пани вăйлă тырпул никĕсĕ пулса тăрать.

Вырăнти удобренисемшĕн кĕрешĕве халĕ пуçарса илнĕ. Кашни бригадирăн, звеноводăн тислĕк пухса, ăна тĕрĕс пăхса усрассишĕн кĕрешмелле. Çулталăк хушшинче кашни лаша пуçне 9 тоннăран кая мар, майракалла шултра выльăх пуçне 10 тонна, кашни сыснă пуçне 2 тоннăран кая мар, кашни сурăхпа качака пуçне çур тонна тислĕк хатĕрлемелле.

Кашни колхозник хуçалăхĕн хăйĕн хуçалăхĕнче 15—20 тонна тислĕк, пĕрер центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл хатĕрлесе, колхоз уйхирне кăларма май пур. Çĕрĕç органĕсен кашни фермăра, витере тата колхозник хуçалăхĕнче мĕн чухлĕ тислĕк хатĕрлемеллине палăртса конкретнăй план тумалла. Ытларах тислĕк хатĕрлес тесен, обществăллă выльăхсем айне кивĕ тата çуллахи вăхăтра хатĕрленĕ торф нумайрах сармалла. Колхозсем тата колхозниксем хутакан кăмакаран обязательнăй йĕркепе кĕл пухассине палăртмалла. Промышленноçлă предприятисенчи кĕлсене те пухмалла. Кĕле усрама кашни бригадăра, звенора халех ятларласа уйрăм вырăнсем тумалла. Кĕл пухмалли вырăнсене пушартан хăрушă мар вырăнсенче тăвас пулать. Кĕле урама тата çырма-çатрасене тухса тăкма чармалла, мĕншĕн тесен кĕл хаклă йышши удобрени пулса тăрать.

Пирĕн республикăри колхозсем тислĕк пухса хатĕрлес тата пăхса усрас, çавнашкалах унпа усă курас тĕлĕшпе туян опыт пухнă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз тислĕке фосфорит çăнăхĕпе, торфпа тата фекалипе компост туса унăн пахалăхне ӳстерет. Кашни агрономăн, зоотехникăн колхозсене тислĕк пахалăхне лайăхлатма пулăшмалла. Тислĕке выльăх картишĕсенче е уйхирте хуçасăрла сапаласа пăрахни пулмалла мар. Тислĕке навозохранилищесене хумалла, е уйхирте 80—100 лав тăкса купасем тумалла.

Çакна палăртас пулать, пур колхозсенче те мар тислĕкшĕн ĕçкунĕ шутласа параççĕ. Тислĕк усрамалли вырăнсем тунă, тислĕке тĕрĕс пăхса усракан тата тислĕк тухмалли плана тултарнă старший конюхсем, çавăн пекех фермăсен заведующийĕсем 20 ĕçкунĕ таран илме тивĕçлĕ.

Колхоз выльăхĕсене пăхакан колхозниксене кашни тонна тислĕкшĕн 0,5 ĕçкунĕпе çырăнса пуçласа пĕр ĕçкунĕ таран, колхоза панă пĕр тонна тислĕкшĕн колхозник хуçалăхĕсене 2—3 ĕçкунĕ, колхоза панă пĕр центнер кĕлшĕн 1—1,5 ĕçкунĕ, пĕр центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕшĕн 2—2,5 ĕçкунĕ шутласа памалла.

Çĕрĕç органĕсен тислĕкшĕн ĕçкунĕ шутласа панине халех тĕрĕслесе тухмалла, çак ĕçе туман колхозсенче ăна халех йĕркелесе ямалла.

Уйхирсем юрпа витĕнчĕç. Халех юр тытса купалантарма тытăнас пулать. Кĕл пуçламĕшĕнчех юр тытса купалантарма пуçăнни пысăкрах усă парать. Колхоз правленисен мĕнтĕр ĕнтĕ щитсене пухмалла, вĕсене юсамалла тата çĕнĕрен щитсем тумалла. Щитсене юрăхсăр хăмасемпе çапăсенчен те тума пулать.

Кашни колхозăн, бригадăн, звенон агротехника енĕпе хĕллехи ĕçсене ăнăçлăн туса пырассишĕн тата вырăнти удобренисене ытларах пухассишĕн кĕрешмелле.

Н. МАЛОВ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сыруесемпе рабселькоровсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин сулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7136

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 557. Ф. б. 58 84 п. л.